42-1
30250

Академик Т. Д. ЛЫСЕНКО

# АПАТ-ÇИМĔÇЕ КАЯКАН ÇĔРУЛМИН ТĂРРИСЕНЕ ЛАРТСА УСĂ КУРАР

Чăваш АССР
Государство Издательстви
Шупашкар 1942

ОБЯЗАТЕ...
экземпляры в кол...
экземпляров
ПОЛУЧЕНЫ
19 г.
Подпись

Апат-çимĕçре, спирт тата крахмалпа патока промышленноçĕнче çĕрулми мĕнле вырăн йышăнса тăни пурне те паллă. Ялхуçалăх производствинче çĕрулми пек тухăçлă пулакан культурăсем пит те сахал. Çĕрулми вăл çынсемшĕн те, вылăх-чĕрлĕхшĕн те пĕр пекех усăллă.

Совет халăхĕ Германи фашизмне хирĕç отечественнăй Аслă вăрçа çĕкленнĕ кунсенче колхозсемпе совхозсем хăйсен вăйĕпе Совет Союзĕн апат-çимĕç ресурсĕсемпе ялхуçалăх чĕртаварĕсен ресурсĕсене вăйлатма тăрăшаççĕ. Çак ĕçре уйрăмăнах 1942 çулта çĕрулми лартмалли çĕре аслăлатасси тата çĕрулми тухăçлăхне ÿстересси çине тивĕçлипе çавăрăнса пăхмалла. Çĕрулми лартмалли çĕр лаптăкне пур районсенче те, уйрăмăнах ССР Союзĕн кăнтăр-хĕвелтухăç районĕсенче, Çĕпĕрти районĕсенче, Казах республикĕнче, Вă-

там Азири тата Кавказ леш енчи социализмлă советлă республикăсенче ӳстермелле пулать. Çак вырăнсенче ку таранччен çĕрулмие ытлах нумай акса туман.

Çĕрулми лартмалли çĕр лаптăкĕсене колхозсемпе совхозсенче те, фабрикăсемпе заводсен подсобнăй хуçалăхĕсенче те тата рабочисемпе служащисен пахчисенче те аслăлатмалла. Çакна тăвас тесен, çĕрулми вăрлăхне хисеп тĕлĕшĕнчен те, пахалăх тĕлĕшĕнчен те халех хатĕрлесе хума тытăнмалла.

ССР Союзĕн кăнтăр-хĕвелтухăç тата хĕвелтухăç районĕсенче чылайăшĕнче мĕн юлашки вăхăтченех вăрлăхлăх çĕрулмине урăх çĕртен кӳрсе тăнă. Кăçал ĕнтĕ çĕрулми вăрлăхне инçетрен кӳрсе килсе транспорт ĕçне йывăрлатас мар тесен, çав вăхăтрах тата çакă тата ытти районсенче çĕрулми лартмалли çĕр лаптăкне чылаях сарас тесен, план тăрăх çĕрулми лартма вăрлăх хатĕрлесе хунисĕр пуçне тата çĕрулми вăрлăхне ытти майсемпе хатĕрлеме тăрăшас пулать.

Столовăйсенче апат хатĕрлеме усă куракан çĕрулми пĕр вăхăтрах тата вăрлăха юрăх-

лă пулать. Çĕрулмирен лартмалли вăрлăх хатĕрлес тесен, ăна тасатнă чухне кашни çĕрулминех шуратмасăр пуçĕнчен 5—15 грамм йывăрăш çуптăк хуппипе касса илмелле. Çĕрулми пуçĕнче шăтса тухакан куçсем (папкăсем) ытларах пулнине пурте пĕлеççĕ. Çĕрулмие чăмăрла лартсан, унăн калчисем пуринчен ытларах пуçĕнчи куçĕсенчен шăтса тухнине асăрхама пулать. Иртнĕ çулсенче туса пăхнă опытсем çакна кăтартса пачĕç: çĕрулмин каснă çуптăкĕсене яровизацилесе лартсан, вĕсем яровизацилемесĕр чăмăрла лартнинчен начарах шăтса тухман тата çĕрулмин тĕмми те начар пулман. Каснă çуптăксене яровизациленĕ чухне куçсенчен тачка туна-папкăсем шăтса тухаççĕ, тымар тухмалли вырăнсем патмар пулаççĕ, тĕммисем лайăх, тухăçлă пулаççĕ.

Апат-çимĕçе каякан çĕрулми тăррисене касса илнĕ çуптăкпа вăрлăх вырăнне усă курса, пур районсенче те çĕрулми лартмалли çĕр лаптăкне ӳстерме пулать. Çапла тунипе халиччен вăрлăх çителĕксĕр пулнă районсенче те ирхи çĕрулми лартса тума пулать.

Çĕрулмин тăррине 5—15 грамм йывăрăш

çуптăкпа пĕрле касса илни апат-çимĕçе каякан çĕрулми хисепне чакармасть теме те юрать. Апат-çимĕçе каякан çĕрулминчен кашни центнер пуçне 8—10 килограмм вăрлăх хатĕрлеме пулать. Çакă ĕнтĕ, паллах, апат-çимĕçе каякан çĕрулми 8—10 килограмм чакнине пĕлтермест. Касса илнĕ çуптăкра çĕрулмин хуппи те пур, çак хупăпа пĕрле ĕнтĕ кашни центнертан касса илнĕ çĕрулми хисепĕ 8—10 килограмм пулать. Çĕрулмин куçлă пуçĕсенчен вăрлăхлăх çуптăксем касса илнĕ чухне, апат-çимĕçе каякан çĕрулми хисепĕ кашни центнер пуçне 5—7 килограмран ытла чакмасть. Çав вăхăтрах кашни центнертан касса илнĕ çуптăксем чăмăрла лартсан 50—70 килограмм çĕрулми кĕрекен çĕр лаптăкĕ çине лартма çитеççĕ.

Кунта тата яланах çакна асра тытмалла: çĕрулмин тăррине çеç касмалла, туна патĕнчен касмалла мар, урăхла каласан, тымарпа çыхăнса тăнă вырăн вĕçĕнчен касмалла мар. Çĕрулмин тăррине тымарлă вĕçĕнчен уйăрма çăмăл. Çĕрулмин тăрринче, тымарлă тепĕр вĕçĕпе танлаштарсан, яланах ытларах куççем пулаççĕ. Кунсăр пуçне,

çĕрулмин тымарлă вĕçĕнче час-часах туна татăкĕн юлашкине, ӳснĕ чухне çĕрулмине тĕмпе çыхăнтарса тăракан тунана асăрхама пулать; е, туна татăкĕ çук пулсан та, вăл çыпçăнса тăнă вырăн питĕ лайăх палăрать.

Çĕрулмин тăрринчен 15 грамран пысăк-




1-мĕш ӳкерчĕк. А—куçĕсем. В—тăрри. Г—туна куçĕ. Д—çыпçăнса тăракан тымар юлашкипе туна куçĕ.

рах çуптăксем касса илмелле мар, мĕншĕн тесен ытларах кассан апат-çимĕçе каякан çĕрулмин хисепĕ чакать. Çавнашкалах тата 5 грамран пĕчĕкрех çуптăксем те касса илме юрамасть, мĕншĕн тесен пĕчĕк çуптăксем часах типсе каяççĕ те начар вăрлăх

лăх пулса тăраççĕ. 150—200 грамм туртакан пысăк çĕрулмин тăрринчен 15 грамм пысăкăш çуптăк касса илмелле. 100 грамм туртакан çĕрулми тăрринчен 5—10 грамм йывăрăш çуптăксем касса илмелле. Çĕрулмин папаккисем пулсан, унăн кашни папаккинченех çуптăк касса илмелле.




2-мĕш ӳкерчĕк.
А — каснă тăрă.

Çĕрулминчен тăррине каснă чухне раснах çĕрулми сывă пулнине лайăх асăрхамалла. Чирлĕ, çĕрме пуçланă, çавăн пекех тата шăннă çĕрулмисенчен çуптăксем касса илме кирлĕ мар. Кун пек çĕрулмисенчен касса илнĕ çуптăксем хăйсен чирне сывă çĕрулминчен касса илнĕ çуптăксене ертме пултараççĕ. Каснă чухне кашни çĕрулмин тăррине пăхса тĕрĕслемелле; çĕрулми варринче хура пăнчăсем е чир-чĕрĕн ытти паллисем пулсан, çак çĕрулминчен

каснӑ тӑрӑсене илме кирлӗ мар, вӗсене ҫӗрулмин ытти тӑккаланчӑкӗсемпе пӗрле корзинкӑна пӑрахмалла. Ҫӗрулмин каснӑ вырӑнӗсене чирлӗ ҫӗрулмипе перӗнтересрен сыхламалла; ҫавӑн пекех тата ӑнсӑртран лекнӗ чирлӗ ҫуптӑкран чир сарӑлса каяссинчен те сыхланмалла. Ҫавӑнпа та касса илнӗ ҫуптӑксене ӑшӑ вырӑнта нумай вӑхӑт тытса усрама юрамасть, каснӑ хыҫҫӑнах вӗсене уҫӑрах вырӑна, анчах сивӗ ҫӗре мар, илсе тухса хумалла. Каснӑ ҫуптӑксене вӑхӑтлӑха усрамалли вырӑнти температура 1—5° ӑшӑ пулмалла. Каснӑ ҫуптӑксене кун пек ҫӗрте те нумай вӑхӑт усрама юрамасть. Кун каҫа пухӑннӑ ҫӗрулми ҫуптӑкӗсене кашни кунах е кун сиктерсе ҫак вӑхӑтлӑха усрамалли вырӑнсенчен ҫӗрулми усрамалли вырӑна, подвала, е тӗпсакайне хурса тӑмалла; кунта температура 1—2° ӑшӑ пулмалла.

Ҫӗрулмин тӑррисене усрамалли вырӑна хунӑ чухне ҫуптӑксене ятарласах тепӗр хут пӑхса тӗрӗслесе тухмалла, чирлисене е ҫӗрме пуҫланисене уйӑрса хӑвармалла. Ҫӗрулминчен касса илнӗ ҫуптӑксем йӗ-

ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
г. Чебоксары Чувашской АССР

пенмен, касса илнĕ выраӑнсем куштӑркаса лайӑх питĕрĕнсе ларнӑ пулсан, ҫав вӑхӑтрах вĕсем шанман, хытӑ пулсан, вĕсем хӑйсен шӑтса тухас пахалӑхне лайӑх сыхласа усраҫҫĕ. Ҫавӑнпа та касса пухнӑ ҫуптӑксене, вĕсен хуппипе каснӑ вырӑнĕсем ан йĕпенсе тӑччӑр тесе, уҫӑ, анчах сивĕ мар хранилищере 10—15 сантиметр хулӑмĕш сийпе сарса хумалла.



3-мĕш ӳкерчĕк. А—папакки.

Ҫĕрулми ҫуптӑкĕсене ун ӑшĕнчи шыв типсе ҫуптӑк шанма тытӑниччен типĕтсе яма юрамасть. Уҫӑрах вырӑнта ҫуптӑксем йĕпе пулмалла мар, ҫуптӑксем каснӑ вырӑнсемпе пĕр-пĕринпе ҫыпҫӑнса лармалла мар пуличчен ҫеҫ типĕтмелле. Ҫак ĕҫе ӑшӑ ҫуртра тума юрамасть, мĕншĕн тесен

ăшă çĕрте хăшпĕр çуптăксем шанма пултарнисĕр пуçне, тата вĕсем хушшинче тĕрлĕ чир-чĕр те хăвăрт сарăлма пултарать. Каснă çуптăксем çӳлерех кăтартса панă чухлĕ кăшт куштăркиччен, вĕсене пĕр вунă кун хушши 10—15 сантиметр хулăмĕш çӳхе сийпе сарса усрамалла. Çак вăхăтра çуптăксем пĕртанах типсе пыччăр тесе, вĕсене темиçе хутчен пăтратса тухмалла. Çакăн хыççăн вара, касса хатĕрленĕ çуптăксем нумай пулсан, хранилищере вĕсене 40 *см* хулăнăш купаласа хума юрать (чи аван услови—20—25 сантиметр хулăмăш сийпе усрани пулать). Анчах та çĕрулми купин ăшĕнчи температура 3° ăшăран мала мар тата 1° ăшăран кая мар пулмалла. Çакна питĕ тĕплĕн асăрхаса тăмалла.

Çĕрулмин вăрлăхлăх касса хатĕрленĕ çуптăкĕсене лайăх пăхса усрамалла. Хранилищери температура 1—2° ăшă пулмалла. Уйрăм çуптăксем çĕрме пуçланине палăртсанах, мĕнпур çĕрулми купине тĕрĕслесе тухмалла, çĕрме пуçланисене уйăрса хранилищерен кăларса пăрахмалла, çуптăксен купине, шăнтасран питĕ асăрханса, ытларах сивĕтмелле.

Вăрлăхлăх касса хатĕрленĕ çĕрулмин тăррисене лайăх, çĕртмесĕр пăхса усрамалли условисенчен пĕри вăл—хранилищери температурăна сулхăнрах, анчах шăнтмалла мар, тытса тăни, час-часах таса сывлăш кĕртсе уçăлтарни пулса тăрать. Чи юрăхлă температура 0° пулать, анчах кун пек чухне ăнсăртран сивĕ пуçлансан, çĕрулми шăнма пултарать, çавăнпа та купа варринче 1—3° ăшă тытса тăма тăрăшмалла. Тата сывлăш лайăхрах кĕрсе уçăлтартăр тесе эрнере пĕр хут та пулин купа сийне йывăç кĕреçепе хускатса тухмалла. Температура сулхăн пулин те çуптăксем çĕрни 5—6 процента çитет пулсан, вара çуптăксен çак купине, çĕрĕккисенчен тасатнă хыççăн, çавăнта хранилищерех формалин ирĕлчĕкне чиксе 2—3 минута хушши тытса тăмалла. Формалин ирĕлчĕкĕ 0,2 процентли пулмалла (40 процентлă формалинăн пĕр пайне 200 пай шывпа хутăштармалла). Çĕрулми вăрлăхĕсене формалин ирĕлчĕкĕнчен кăларсан, чир пуçламăшĕсем пĕтчĕр тесе, пĕрер-икшер центнертан купасем туса 2—3 сехет хушши брезентпа е урăх япалапа витсе вырттар-

малла. 2—3 сехет иртнĕ хыççăн çĕрулми çуптăкĕсене витнĕ брезента е урăх япалана сирмелле те, çĕрулми кулисене сапаласа 10 сантиметр хулăмĕш сийпе сарса темиçе кун хушши çаплипех вырттармалла. Çĕрулми çуптăкĕсем типсе çитиччен кашни кунах вĕсене 2—3 хутчен пăтратса тăрас пулать. Çакăн хыççăн вара вĕсене хулăмрах сийсемпе купаласа усрама та юрать.

Çуркунне, лартас умĕн, çĕрулмин тăррисене яровизацилес пулать. Кун çинчен хаçатсем урлă вăхăтрах тивĕçлĕ канашсем парăпăр.

Çĕрĕн пĕр-пĕр лаптăкĕ çине лартмашкăн çапла касса хатĕрленĕ çĕрулмин тăрри чăмăрла лартмалли вăрлăхпа танлаштарсан, 5—6 хут сахалрах кирлĕ пулать. Çавăнпа та хулара тата ытти вырăнсенче касса хатĕрленĕ çĕрулмин тăррисене—çуптăксене çуркунне лартмалли вырăнсене турттарса кайма ансат, çăмăл пулать.

Малтанах калас пулать, пирĕн халĕ вăрлăхлăх касса хатĕрленĕ çуптăксене (çĕрулмин тăррисене) лартиччен нумай вăхăт сыхласа усрамалли опыт çук-ха. Анчах

çапах та ку 1942 çулта çак майпа çĕрулми лартмалли çĕр лаптăкне чылай ӳстерме май çукки çинчен каламасть. Халех, пĕр кун та тăхтамасăрах, çак ĕçе çине тăрсах тытăнсан, эпир, ку тĕлĕшпе опыт пухнипе пĕр вăхăтрах, тата çуркуннеччен темĕн чухлĕ çĕрулми вăрлăхĕ хатĕрлеме пултаратпăр.

Эпир малтанласа çапла калама пултаратпăр: кĕркуннехи вăхăтра тата хĕлĕн малтанхи пайĕнче касса пухнă çуптăксене, çакăнта маларах каласа панă условисенче усрасан, çĕрулми хуракан ахаль подвалсенчех лайăх сыхласа усрама пулать. Çĕрулми лăпкă выртнă тапхăрта, урăхла каласан, çĕрулми шăтас пултарулăха илмен вăхăтра, каснă вырăн часах куштăркаса каять те (питĕрĕнсе ларать те), вара ун витĕр шыв питĕ начар тухакан пулать. Çавăнпа та хĕлĕн малтанхи пайĕнче касса хатĕрленĕ çуптăксене подвалсенче сыхласа усрама лайăхрах.

Хĕлĕн иккĕмĕш çурма пайĕнче, çĕрулми шăта пуçласан, урăхла каласан, лăпкă текен тапхăр иртнĕ хыççăн хатĕрленĕ çуптăксен каснă вырăнĕсем час куштăркаса

типмеççĕ, çавăнпа та вĕсем ытларах шанса типсе каяççĕ (хĕлĕн иккĕмĕш çур пайĕ хăçан пулнине тĕплĕн кăтартса пама çук, мĕншĕн тесен çĕрулми шăтма пуçлас вăхăт вăл çĕрулми сортĕнчен тата районран килет).

Касса хатĕрленĕ çуптăксене шанса типсе каясран сыхлас тесен, хĕлĕн иккĕмĕш çурма пайĕнче каснă çуптăксене, хранилищере, тен, сийĕн-сийĕн хăйăрпа сапса, çуркуннеччен çаплипех усрама тивет.

Эпир столовăйсен руководителĕсене, колхоз председателĕсене, агрономсене, совхозсемпе подсобнăй хуçалăхсен директорĕсене, çавăн пекех тата колхозниксене, рабочисемпе служащисене, хăйсен килĕсенче çĕрулминчен тĕрлĕ апат-çимĕç пĕçерсе усă курнă чухне, çĕрулмин тăррисене вăрлăхлăх касса хăварса анлă опыт тума сĕнетпĕр.

Обществăллă столовăйсенче тата уйрăм хуçалăхсенче çĕрулмин тăррисене вăрлăхлăх халех касса пухма тытăнсан, чи малтанах, çĕрулмин лартмалли вăрлăхне хатĕрлес вăхăт иртсе каймасть, унтан кашни çынах касса хатĕрленĕ çуптăксене мĕнле пăхса усрас тĕлĕшпе опыт илет. Çак опыт-

па усă курса вара çĕрулмин вăрлăхлăх касса пухнă тăррисене малашне кашниех тĕрĕс пăхса усрама пултарать. Пирĕн шутпа, хĕлĕн малтанхи пайĕнче касса пухнă çуптăксем, хĕлĕн иккĕмĕш пайĕнче касса пухнисенчен лайăхрах усранма пултараççĕ. Кун çинчен эпир маларахах каларăмăр.

Кĕркунне, çĕрулми кăларса пухнă чухне, кĕреçепе çурмаран касса пăрахнă çĕрулмисен каснă вырăнĕсене часах ўт илнине пурте асăрханă пулмалла. Çакăн пек çĕрулмисем хранилищере, касăлман çĕрулмисем пекех, питĕ лайăх сыхланса выртаççĕ—шанмаççĕ, çĕрмеççĕ. Çакăн пек кĕркунне касăлса аманнă çĕрулмисен суранĕсем часах тўрленеççĕ, вĕсен типесрен сыхлакан çĕнĕ хупă пулса тăрать. Çуркунне каснă татăксене, сăмахран, пысăк çĕрулмие лартма каснă чухне, лартиччен темиçе кун хушши сыхласа усрама та чылаях йывăр. Вĕсем часах, 1—2 кун хушшинчех, шанса каяççĕ, хăйсен шăтса тухас пултарулăхне чакараççĕ. Çĕрулмине шăтас пултарулăх кĕнĕ хыççăн кассан, каснă вырăнта вара типесрен сыхлакан хупă час пулмасть. Çавăнпа та ĕнтĕ вăрлăхлăх çуп-

тăксене иртерех пухма тытăнмалла, кая юлмалла мар; вăрлăхăн тĕп массине хатĕрлесе хума хранилищере выртакан çĕрулмине шăтас пултарулăх кĕриччен халех тытăнмалла. Иртерех касса хатĕрленĕ çĕрулмин тăррисене сыхласа усрама çăмăлтарах.

Эпир çапла канаш паратпăр: хĕлĕн малтанхи çурма пайĕнче апат-çимĕçе каякан кашни сывă, шăнман çĕрулмирен, унпа апат пĕçернĕ чухне усă курнипе пĕр вăхăтрах, вăрлăхлăх çуптăк касса хăвармалла. Çакна тăвас тесен, çĕрулми хуппине шуратнă чухне, çавăн пекех тата çĕрулмие чăмăрла пĕçернĕ чухне те, кашни сывă çĕрулмиренех хуппи-мĕнĕпех тăррине касса илмелле.

Çĕрулмирен тăррине хăвăрт тата тĕрĕс касма, çавнашкалах тата сывă çĕрулмисене сывмаррисенчен уйăрса илме, хăнăхни кирлĕ. Çавăнпа та пысăк столовăйсен кухнисенче çак ĕçе тума яланлăхах 1—2 çын уйăрмалла, ыттисен вара çĕрулми хупписене тасатмалла. Апат-çимĕçе каякан çĕрулмин касса илнĕ вырăнĕсем часах куштăркаса типсе кайма пултараççĕ, çавăнпа та çуп-

тăксене çĕрулмин хуппине шуратас, е ăна чăмăрла пĕçерес умĕн çеç касмалла. Пĕр-пĕр сăлтав пирки, сăмахран, каснă çуптăксене кухньăран хранилищене шартлама сивĕ вăхăтра илсе кăларма тивет пулсан, çĕрулмине шăнма парас мар тесе, хранилищерен столовăя-панă чухнех, хранилищерех, касса юлма юрать. Анчах кун пек чухне те çĕрулмие пĕçерес умĕн 3—5 кунран мала касса хума юрамасть, мĕншĕн тесен апат-çимĕçе каймалли çĕрулмине аманнă хыççăн сыхласа усрама йывăртарах.

Килти условисенче апат пĕçернĕ çĕре çĕрулми нумай каймасть, çавăнпа та килте çĕрулмирен касса илнĕ çуптăксем те нумай пухăнмаççĕ. Анчах сахал çуптăк та, ăшă çĕрте нумай вăхăт тытса усрасан, шанса типсе каять. Çавăнпа та килте пĕр-пĕр уçăрах вырăна ещĕк е корзина лартмалла та, каснă çĕрулмин тăррисене кашни кун çавăнта пухса пымалла.

Каснă çĕрулмин тăррисене хĕл каçармалли вырăна (подвала, тĕпсакайне т. ыт. çĕре те) кашни кунах илсе кайма май килмест пулсан, вĕсене вăхăтлăха пурăнмалли пӳлĕмрен сиверех вырăна пухса

хумалла, вара кашни 5—10 кун хушшинче пухăннă çуптăксене вăхăтран вăхăта нумайччен усрамалли вырăна (подвала, тĕпсакайне т. ыт. çĕре те) кăларса хумалла.

Çакна çирĕп асра тытмалла: çĕрулмин тăррине касса вăрлăх хатĕрлени—план тăрăх лартма палăртнă çĕр лаптăкĕ валли кирлĕ çĕрулми вăрлăхĕ хатĕрлесе, типтерлĕ сыхласа усрас ĕçе пĕре те чакармалла мар. Çĕрулмин тăррисене касса хатĕрленĕ вăрлăхпа—колхозсемпе совхозсенче, подсобнăй хуçалăхсенче тата рабочисемпе служащисен пахчисенче 1942 çулта çуркунне çĕрулми лартмалли çĕр лаптăкĕсене аслăлатас тĕлĕшпе усă курмалла. 1942 çулти çуркунне хуласем тата халăх пурăнакан ытти пунктсем тавра ытларах çĕрулми лартса хăвармалла.




4-мĕш ӳкерчĕк. Яровизациленĕ çĕрулмин тăрри.
А—çĕрулми сăмсаланни.

Тĕрĕс касса хатĕрленĕ тата лайăх пăхса хĕл каçарнă, çавнашкалах тата лартас умĕн яровизациленĕ (12—15° ăшă тата

çутă вырăнта 10—15 кун хушши тытса тăнă) çĕрулмин тăррисем лартма питĕ лайăх вăрлăх пулаççĕ, тесе ĕнентерсех калама пулать. Çакăн пек майпа хатĕрленĕ вăрлăхпа усă курса, çĕрулми лартмалли çĕр лаптăкне чылаях аслăлатма пулать. Çакнашкал вăрлăха пухса хатĕрлес ĕç ăнăçлă пуласси пĕтĕмпех ĕнтĕ çĕрĕç органĕсем çĕрулмин тăррисене касас тата вĕсене пăхса усрас ĕçе организацилеме пĕлнинчен килет.

Ялсемпе хуласенче çĕрулмин тăррисене касса хатĕрлес тата вĕсене пăхса усрас ĕçе комсомол организацисем хутшăнсан, çавăн пекех тата шкул ачисемпе пионерсем, ку ĕçе вĕсен руководителĕсемпе учительсем ертсе пырсан, пысăк пулăшу пама пултараççĕ.

1942 çулта хăшпĕр районсенче çĕрулми вăрлăхĕ çителĕклĕ пулманни—çĕрулми лартмалли çĕр лаптăкне аслăлатассине чарса тăмалла мар. ССР Союзĕнчи пур районсенче те кашни колхоз, кашни совхоз, подсобнăй хуçалăх, рабочипе служащи çемьи, кĕркуннехи тата хĕллехи вăхăтсенче хăйсене валли çителĕклипех вăрлăх

хатĕрлесе хума пултараççĕ. Ку ĕçе чăнласах тытăнни çеç кирлĕ.

1942 çулта пысăк тухăçлă çĕрулми туса илессишĕн кĕрешни вăл—пирĕн тăван çĕршывăн апат-çимĕç тата чĕртавар ресурсĕсемшĕн кĕрешни пулать. Çак ĕнтĕ урса кайнă захватчиксене, нимĕç фашизмне—гитлеризма хирĕç кĕрешес ĕçре хамăрăн тăван çĕршыва, паттăр Хĕрлĕ Çара пулăшу пани пулать.

Çĕрĕç органĕсен пур майсемпе те хăвăртрах çĕрулми вăрлăхĕ çителĕклĕ таран пухса хатĕрлес ĕçе организацилемелле. Ялхуçалăх тĕпчев учрежденийĕсен çак ĕçе наукăпа методика енчен ертсе пымалла.

---

## ÇĔРУЛМИН КАСНĂ ТĂРРИСЕНЕ КОЛХОЗСЕНЧЕ СЫХЛАСА УСРАССИ ÇИНЧЕН КĔСКЕН КĂТАРТСА ПАНИСЕМ

1. Çĕрулмине сыхласа усранă чухне çĕрулми пăсăлнин тĕп сăлтавсенчен пĕри вăл—çĕрулмие хĕллехи вăхăтра сыхласа усрама юрăхлă мар хранилищере усрани пулать.

Вăрлăхлăх касса хатĕрленĕ çĕрулмин тăррисене усрама хунă чухне уйрăмах хранилищере юрăхлă условисем тăвасси çине хытă пăхас пулать.

2. Сыхласа усрамашкăн хранилищене сывă, çĕрме пуçламан çĕрулмин тăррисене çеç, вĕсене академик Лысенко кăтартса панисем тăрăх хатĕрленĕ хыççăн тин, хума юрать.

3. Вăрлăхлăх каснă çĕрулмин тăррисене пăхса усрассине кашни колхозрах уйрăм çын çине хумалла. Çак ĕçе тума уйăрнă çын

çĕрулмине пĕтĕмпех сыхă пăхса усрасси-шĕн ответлă пулмалла, ăна ку тĕлĕшпе ятарласа инструктаж парса вĕрентмелле.

4. Инструктаж туса ирттермешкĕн рай-зо, МТС агрономĕсене тата вăрлăх тĕ-рĕслекен лабораторисенче ĕçлекен агро-номсене хутшăнтармалла.

5. Колхоз правленийĕсен хăйсен çĕр-улми хывса усрамалли лайăх хранилище-сенче хăйсен хуçалăхĕнче вăрлăхлăх касса пухнă çĕрулмин тăррисене çеç мар, тата колхозниксем, çавнашкалах тата общест-вăллă столовăйсем тытакан суту-илӳ ор-ганизацийĕсем пырса панă çĕрулмин тăр-рисене те пăхса усрас ĕçе организаци-лемелле.

6. Вăрлăхлăх касса пухнă çĕрулмин тăр-рисене çĕртмесĕр пăхса усрамалли тĕп услови вăл—температура 1—2 градус ăшă пулни тата уçă сывлăш кĕрсе тăни пулать. Çавăнпа та вăрлăхлăх касса пухнă çĕр-улмин тăррисене усранă чухне чи мал-тан çĕрулми усрама ятарласа тунă храни-лищесемпе усă курмалла, вĕсенче çĕрулми çуптăкĕсене пăхса усрама юрăхлă услови-сем тума (кирлĕ пек вентиляци, тивĕçлĕ

температура условийĕсем т. ыт. те) тата вĕсене кирлĕ пек пăхса усрама пулать.

Вăрлăхлăх касса пухнă нумаях мар çĕрулмин тăррисене сыхласа усрас тĕлĕшпе, çавăн пекех тата малтан лайăх типĕтсе дезинфекци туса тасатнă тата çĕрулмин тăррисем шăнса пăсăласран хăрамалла мар тĕпсакайсемпе, подвалсемпе усă курма пулать.

7. Вăрлăхлăх çĕрулмин тăррисене усрама суйласа илнĕ хранилищесене, е вĕсен уйрăм пайĕсене питĕ тĕплĕн хатĕрлемелле: унта выртнă кивĕ çĕрулми юлашкийĕсемпе тĕрлĕ çӳп-çапран тасатмалла, тин çеç хатĕрленĕ çăра известь растворĕпе (10 литр шыв çине 2—2,5 килограмм тин сӳнтернĕ известь ямалла) дезинфекци тумалла, урайне сӳнтермен авăртнă извеçпе е тин çеç сӳнтернĕ известь порошокĕпе сапса тухмалла.

Известь çук пулсан, ун вырăнне кăмака кĕлĕн çăра растворĕпе (кĕл тăррипе) усă курма юрать.

8. Сарса хунă çĕрулми сийĕ ăшне сывлăш лайăхрах кĕрсе çӳретĕр тесе, пӳлме хăмисене тăм урайĕнчен 20—25 сантиметр çӳлерех çĕклесе вырнаçтармалла.

9. Вӑрлӑхлӑх касса хатӗрленӗ ҫӗрулмин тӑррисене пӑхса усрас тӗлӗшпе академик Лысенко кӑтартса панисене пурнӑҫа кӗртсе, 1—2 центнершер пысӑках мар купасене хурса усрамалла.

10. Вӑрлӑхлӑх ҫӗрулмин тӑррисене хӗлӗн иккӗмӗш ҫурма пайӗнче касса пухнӑ пулсан, анлӑ опыт тӑвас майпа, ҫак ҫӗрулмие кӑштах кӗлпе сапса сыхласа усрамалла.

11. Шартлама сивӗсенче, хранилищери температура 0 градус патне ҫывхара пуҫласан, хранилищене мӗнле те пулин майпа (юрпа, тислӗкпе т. ыт. те) ӑшӑтмалла.

---

## АПАТ-ÇИМĔÇЕ КĂЯКĂН ÇĔРУЛМИН ТĂРРИСЕНЕ ЛАРТСА УСĂ КУРАССИ ÇИНЧЕН

### Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Чăваш Обкомĕ йышăннă постановлени

Германи фашизмне хирĕç пыракан отечественнăй аслă вăрçă кунĕсенче колхозсемпе совхозсем Совет çĕршывĕн апат-çимĕç ресурсĕсемпе ялхуçалăх чĕртаварĕсен ресурсĕсене нумайлатма тăрăшнă вăхăтра, çĕрулми лартмалли çĕр лаптăкне аслăлатасси тата унăн тухăçлăхне хăпартасси уйрăмăнах пысăк вырăн йышăнса тăрать.

Лартмалли çĕрулми вăрлăх запасне ӳс-

терес тĕлĕшпе апат-çимĕçе каякан çĕрулмин тăррисемпе лартма усă курасси çинчен Лысенко академик панă сĕнĕве пысăк вырăна хурса, Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Чăваш Обкомĕ çапла йышăнаççĕ:

1. Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариатне, райсоветсен исполкомĕсене тата ВКП(б) райкомĕсене колхозсемпе общественнăй апатлану ĕçĕн организацийĕсен руководителĕсем хушшинче, колхозниксем, рабочисем, служащисем тата столовăй работникĕсем хушшинче çĕрулми лартмалли вăрлăхсене хушса нумайлатас тĕлĕшпе апат-çимĕçе каякан çĕрулмин тăррисене касса илсе хатĕрленĕ вăрлăхпа усă курни пысăк вырăнта тăни çинчен ăнлантарса пама хушас.

2. Столовăйсем çумĕнче çĕрулмин тăррисене хатĕрлемелли плана хушса панинче кăтартнă чухлĕ йышăнас.

Наркомторга—Никитин юлташа, Чăвашсоюза—Ларионов юлташа, Леспродторга, райсоветсен исполкомĕсене тата колхоз правленийĕсене столовăйсенче пуринче те апат-çимĕçе каякан çĕрулмин тăррисене

обязательно вăрлăх валли касса хатĕрлес ĕçе организацилеме, тата вĕсене 1942 çулти çуркуннеччен сыхласа усрамалла тума хушас. Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕпе райçĕрĕç пайĕсен çĕрулмин тăррисене илсе тăмашкăн столовăйсем çумне уйрăм колхозсене çирĕплетме хушас.

3. Çĕрĕç Халăх Комиссариатне, райçĕрĕç пайĕсене, обществăллă апатлану организацийĕсен руководителĕсене вунă кун хушши срокра колхозсемпе столовăйсенче апат-çимĕçе каякан çĕрулмин тăррисене вăрлăхлăх касса хатĕрлес ĕçе организацилессишĕн ответлă çынсем уйăрма хушас, вĕсене пухса тивлĕçĕ инструктаж туса ирттермелле. Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн çĕрулмин тăррисене пăхса усрасси çинчен инструкци хатĕрлесе, ăна колхозсене çитермелле.

4. Апат-çимĕçе каякан çĕрулмин тăррисене лартма усă курасси çинчен Лысенко академик панă сĕнӳ çинчен колхозниксем, рабочисемпе служащисем хушшинче пысăккăн ăнлантарса парас шутпа, Чăваш АССР Государство Издательствине Лысенко юлташăн кĕнекине 5000 экземпляр

пичетлесе кăларма хушас, ку хисепрен 3000 экземпляртан кая мар чăвашла пулмалла.

5. Райзо тата МТС агрономĕсене çĕрулмин тăррисене вăрлăхлăх касса хатĕрлес ĕçе куллен-кун ертсе пыма хушас, вĕсен колхозниксемпе служащисем хушшинче çак ĕç çинчен анлăн ăнлантарса памалла, вăрлăхлăх касса хатĕрленĕ çĕрулмин тăррисене усрас ĕçе уйрăм контроле илмелле.

6. ВЛКСМ Обкомне комсомол тата пионер организацийĕсем умне 1942 çулта çĕрулми лартмалли çĕр лаптăкне чылаях сарса яма çĕрулмин тăррисене касса хатĕрлес тата вĕсене сыхласа усрас задачăна лартма хушас.

7. Колхоз правленийĕсене, райзосене, райсовет исполкомĕсене çакăн çинчен асăрхаттарас: Лысенко академикăн çак сĕнĕвне пурнăçа кĕртесси вăл пĕре те план тăрăх лартма палăртнă çĕр лаптăкĕ валли çĕрулми вăрлăхĕ кирлĕ чухлĕ хатĕрлесе хурас ĕçе вăйсăрлатассине пĕлтермест. Çĕрулмин тăррисене касса хатĕрленĕ вăрлăх колхозсемпе совхозсенче, подсобнăй хуçалăхсенче тата рабочисемпе служащисен

пахча-çармисенче 1942 çулта çуркунне çĕрулми лартмалли çĕр лаптăкĕсене массăллăн аслăлатас ĕçе каймалла.

**Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ А. СОМОВ.**

**ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ И. ЧАРЫКОВ.**

Редактор И. П. Павлов-Пинер

Подп. к печ. 10.II.1942 г. НТ 649
Объем 1,0 Тир. 3000 Зак. 704.

г. Чебоксары, типография № 1
Управления изд. и полиграфии
при СНК ЧАССР.

5
О.Т.К.

ЧУВАШС...
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
...сары Чувашской АССР

Тӳлевсӗр

Академик Т. Д. ЛЫСЕНКО

ИСПОЛЬЗОВАТЬ ДЛЯ ПОСАДКИ ВЕРХУШКИ КЛУБНЕЙ ПРОДОВОЛЬСТВЕННОГО КАРТОФЕЛЯ

На чувашском языке
Госиздат 1942 ЧАССР